26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
31
ВЫРСАРНИКУН
217(6454) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци пулнӑранпа 26 ҫул ҫитнӗ тӗле ВКП(б) Центральный Комитечӗ

ЧӖНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Пирӗн ҫӗршывра империалистсен влаҫне сирпӗтсе антарнӑ тата пӗтӗм тӗнчери халӑхсем хушшинче мир тӑвасси ҫинчен пӗлтернӗ Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци пулнӑранпа 26 ҫул тултарни сывӑ пултӑр!

2. Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене, Европӑри халӑхсен юнне тӑкакан пусмӑрҫӑсене, пӗтӗм тӗнчери ирӗклӗхе юратакан халӑхсен ылханлӑ тӑшманӗсене—вилӗм!

3. Юлташсем—красноармеецсемпе краснофлотецсем тата командирсем, партизансемпе партизанкӑсем! Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхне, чыслӑхне тата никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлӗр! Гитлерла вӑрӑ-хурахсене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пырӑр, тӑван ҫӗре ылханлӑ тӑшманран тасатӑр!

4. Гитлерла империализма хирӗҫ кӗрешекен Европӑри халӑхсене салам! Европӑри ҫӗршывсен патриочӗсем, хӑвӑра фашистла пусмӑрлӑхран ирӗке кӑларассишӗн хӗҫпӑшалпа тӑрса ҫапӑҫма ҫӗкленӗр! Гитлерла тирание сирпӗтсе антарӑр!

5. Тӑвансем—пусмӑрти славянсем! Нимӗҫ пусмӑрҫисене—славян халӑхӗн вилӗмле тӑшманӗсене хирӗҫ халӑх вӑрҫин ҫулӑмне анлӑрах сарса ярӑр! Славян халӑхӗсем гитлерла империалистсене хирӗҫ хӗҫпӑшалпа тӑрса ҫапӑҫасси сывӑ пултӑр!

6. Англипе Совет Союзӗн тата Америкӑн боевой союзӗ этемлӗхӗн чи хаяр тӑшманне—нимӗҫсен фашистла пусмӑрҫисене ҫӗнтересси сывӑ пултӑр! Ирӗклӗхе юратакан халӑхсен пӗтӗм вӑйӗпе кӗрешӳри хӑватне гитлерла Германие хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма ярар!

7. Сывӑ пулччӑр Англипе Америкӑн паттӑр ҫарӗсем, нимӗҫ фашисчӗсене хирӗҫ Итали территорийӗнче кӗрешекенскерсем!

8. Англипе Америка авиацийӗн летчикӗсене, фашистла Германин пурнӑҫ центрӗсене пырса ҫапаканскерсене, салам!

9. Советлӑ Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫава Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен ывӑлӗсем кӗреҫҫӗ. Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫар—ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванлӑхӗпе туслӑхӗн ҫарӗ!

10. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем! Сире, ирӗке кӑларакансене, нимӗҫсен фашистла пусмӑрӗнче хӗн куракан миллионшар совет ҫыннисем кӗтеҫҫӗ. Тӑшмана хытӑрах ҫапӑр, нимӗҫ захватчикӗсене пӗтере-пӗтере тӑкӑр. Совет ҫӗрне пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларассишӗн—малалла, Хӗвеланӑҫнелле!

11. Пирӗн хуласемпе ялсене ҫаратса тата аркатса пӗтернӗшӗн, хӗрарӑмсемпе ачасене асаплантарнӑшӑн, совет ҫыннисене вӗлернӗшӗн тата нимӗҫ чуралӑхне хӑваласа кайнӑшӑн нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсене пӗтерсе тӑкса тавӑрар. Нимӗҫ мерзавецӗсене вилӗм!

12. Хӗрлӗ Ҫар пехотинецӗсем! Тӑшман ҫарӗсене пӗр чарӑнусӑр хӑваласа пырӑр тата пӗтере-пӗтере тӑкӑр. Вӗсене оборона рубежӗсенче ҫирӗпленсе ларма ан парӑр! Нимӗҫ захватчикӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илӗр тата тыткӑна илӗр, тыткӑна парӑнма килӗшмеҫҫӗ пулсан, вӗсене пӗтерсе-тӑкӑр!

Сывӑ пулччӑр совет пехотинецӗсем!

13. Совет летчикӗсем—пирӗн Тӑван ҫӗршыван соколӗсем! Тӑшмана сывлӑшра та, ҫӗр ҫинче те, тинӗсре те пӗр шеллемесӗр ҫӗмӗрсе пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет летчикӗсем!

14. Хӗрлӗ Ҫарӑн танкисчӗсем! Тӑшмана ҫӗмӗре-ҫӗмӗре тӑкӑр тата ывӑнма пӗлмесӗр хӑваласа пырӑр! Хӑюллӑ маневрсем туса, тӑшманӑн каялла чакмалли ҫулӗсене татӑр, нимӗҫ захватчикӗсене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтерсе пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет танкисчӗсем!

15. Хӗрлӗ Ҫар артиллерисчӗсемпе минометчикӗсем! Тӑшманӑн хирӗҫ тӑмалли тӗреклетнӗ пункчӗсене, тӗввисене тата укреплениййӗсене хӑватлӑн пере-пере ҫӗмӗрӗр! Пирӗн тапӑнса пыракан ҫарсем валли ҫул тасатса парӑр, противникӑн техникипе салтакӗсене пӗтере-пӗтере тӑкӑр!

Сывӑ пулччӑр совет артиллерисчӗсемпе минометчикӗсем!

16. Тинӗс-Ҫар флочӗн краснофлотецӗсемпе командирӗсем! Тӑшмана вӑйлӑнрах ҫапӑр! Противникӑн карапӗсемпе транспорчӗсене пӗтере-пӗтере тӑкӑр, гитлерла захватчиксене пӗр шеллемесӗр вӗлерсе пӗтерӗр!

Сывӑ пулччӑр совет морякӗсем!

17. Хӗрлӗ Ҫарӑн кавалерисчӗсем! Тӑшман ҫарӗсене ывӑнма пӗлмесӗр хӑвалӑр, противник речӗсене хӑюллӑн та татӑклӑн шӑтара-шӑтара кӗрӗр, унӑн тылӗсемпе флангӗсене аркатӑр, нимӗҫсен фашистла ҫӗлен-калтисене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет кавалерисчӗсем!

18. Хӗрлӗ Ҫарӑн разведчикӗсем! Нимӗҫсен тылӗнче хӑюллӑн кӗрешӗр! Противник ӑҫта вырнаҫса тӑнине тата унӑн вӑйӗсене тупса палӑртӑр, унӑн шухӑшӗсемпе ӗмӗчӗсене тӗпчесе пӗлӗр! Тӑшмана шанчӑклӑн ҫапма пирӗн тапӑнса пыракан ҫарсене пулӑшӑр!

Сывӑ пулччӑр советӑн хӑюллӑ разведчикӗсем!

19. Хӗрлӗ Ҫарӑн связисчӗсем! Лайӑх ҫыхӑну тӑшмана ҫӗнтермелли питех те кирлӗ услови пулса тӑнине асра тытӑр! Хӗрлӗ Ҫарти ҫыхӑну ӗҫне пур майсемпе те лайӑхлатса пырӑр!

Сывӑ пулччӑр совет связисчӗсем!

20. Инженерла саперла ҫарсен боецӗсемпе командирӗсем! Наступлени тӑвакан ҫарсене ылханлӑ тӑшмана ҫӗмӗрме пур майсемпе те пулӑшӑр!

Сывӑ пулччӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн инженерла-саперла чаҫӗсем!

21. Сывӑ пулччӑр пирӗн мухтавлӑ пограничниксем, совет чиккисене шанчӑклӑн хӳтӗлекенсем!

22. Хӗрлӗ Ҫарӑн медицина работникӗсем! Врачсем, медсестрасем, санитарсем! Эсир вӑя шеллемесӗр ӗҫлениннчен советӑн аманнӑ воинӗсен пурнӑҫӗ тата вӗсем строя каялла таврӑнасси килнине асра тытӑр!

Сывӑ пулччӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн медицина работникӗсем!

23. Войскӑсен тылӗнчи работниксем! Действующи Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсене хӗҫпӑшалсем, боеприпассем тата апат-ҫимӗҫ вӑхӑтра, ҫителӗклӗ парса тӑрӑр! Хӗрлӗ Ҫара наступлени тума пӗтӗм вӑйпа пулӑшӑр!

Сывӑ пулччӑр войскӑсен тылӗнчи работниксем!

24. Хӗрлӗ Ҫарӑн гвардеецӗсем! Гвардин мухтавлӑ ялавӗсене чыслӑн тытса пырӑр! Тӑшмана хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте паттӑрлӑхпа хӑюлӑхӑн чи лайӑх тӗслӗхӗсене кӑтартӑр!

Сывӑ пултӑр совет гвардийӗ!

25. Тӑвансем! Вӑхӑтлӑха нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсен пусмӑрне кӗрсе ӳкнӗ вырӑссем, украинецсем, белоруссем, молдавансем, литовецсем, латышсем, эстонецсем, карелсем! Сире ирӗке кӑларас сехет ҫывхарса килет! Пӗтӗм халӑхӑн партизанла юхӑмӗн ҫулӑмне сарса ярӑр! Нимӗҫ мерзавецӗсене пӗтере-пӗтере тӑкӑр! Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм вӑйпа пулӑшӑр!

26. Совет партизанӗсемпе партизанкисем! Тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма наступлени тӑвакан Хӗрлӗ Ҫара пулӑшӑр! Нимӗҫсен тылӗсене вӑйлӑнрах пыра-пыра ҫапӑр, чугун ҫулсене, кӗперсене тата ҫыхӑну хатӗрӗсене аркатса тӑкӑр, противникӑн салтакӗсене вӗлере-вӗлере пӗтерӗр! Нимӗҫсене пирӗн ялсемпе хуласене ҫунтарса яма ан парӑр! Гитлерла палачсем нимӗҫ чуралӑхне хӑваласа каяссинчен тата вӗлерсе пӗтерессинчен совет ҫыннисене ҫӑлса хӑварӑр!

Нимӗҫ ҫынҫиенӗсене ылхав та вилӗм!

Сывӑ пулччӑр пирӗн мухтавлӑ партизансемпе партизанкӑсем!

27. Сывӑ пултӑр пирӗн ҫӗршыври халӑхсен никам аркатайми туслӑхӗ!

28. Сывӑ пултӑр пирӗн ҫӗршыври рабочисен, колхозниксен тата интеллигентсен тӑванла союзӗ!

29. Совет Союзӗн Геройӗсемпе Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗсене—пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсене мухтав!

30. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем! Фронтовиксен ҫемьисемшӗн тӑрӑшни эпир Хӗрлӗ Ҫаршӑн тӑрӑшнин уйӑрӑлми пайӗ пулса тӑрать. Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекенсен ҫемьисемшӗн пӗтӗм халӑхпа тӑрӑшар!

31. Фронт валли хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем туса кӑларакан предприятисенчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Винтовкӑсем, автоматсем, пулеметсем, минометсем, тупӑсем, снарядсем, патронсемпе минӑсем туса кӑларассине ӳстерӗр! Вӑрҫӑ продукцийӗн пахалӑхне пӗрмаях лайӑхлатса пырӑр! Йӑлтах фронт валли, йӑлтах ҫӗнтерӳ валли!

32. Танксем тӑвакан заводсенчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Хӗрлӗ Ҫара боевой машинӑсем ытларах парса тӑрӑр! Лайӑх танксем мӗн чухлӗ нумайрах пулӗҫ—тӑшмана ҫӗнтерес сехет ҫавӑн чухлӗ ҫывӑхрах пулӗ!

33. Авиаци завочӗсенчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Хӗрлӗ Ҫар валли истребительсем, штурмовиксем, бомбардировщиксем ытларах парса тӑрӑр!

34. Нефть промышленноҫӗнчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Нефть кӑларассине вӑйлатӑр! Фронтпа ҫӗршыва горючи ытларах парса тӑрӑр!

35. Кӑмрӑк промышленноҫӗнчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Транспортпа промышленность пӗр чӑрмавсӑр ӗҫлесси сирӗнтен килет! Кӑмрӑк кӑларассине ӳстерӗр, фронтпа тыла кирлӗ чухлех топливо парса тӑрӑр!

36. Металлурги завочӗсенчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Танксем, самолетсем, тупӑсем, пулеметсем, снарядсем тума металл ытларах парса тӑрӑр!

37. Мотор тӑвакан промышленноҫри рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Хальхи вӑрҫӑ моторсен вӑрҫи пулса тӑрать. Самолетсем, танксем, автомобильсем, карапсем валли моторсем туса кӑларассине ӳстерӗр!

38. Строительствӑри рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Васкавлӑ меслетсемпе ҫӗнӗ домнӑсем, мартенсем, шахтӑсем, электростанцисем тата заводсем тӑва-тӑва лартӑр! Нимӗҫ захватчикӗсем ҫӗмӗрсе пӗтернӗ хуласене, промышленность предприятийӗсене тата пурӑнмалли ҫуртсене хӑвӑртрах юсаса ура ҫине тӑратӑр!

39. Ҫӑмӑл тата пир-авӑр промышленноҫӗнчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Хӗрлӗ Ҫар валли тумтирсем тата халӑх валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине кунран-кун ӳстерсе пырӑр!

40. Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗнчи рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Фронт валли тата халӑх валли апат-ҫимӗҫ туса кӑларассине ӳстерсе пырӑр!

41. Вырӑнти промышленноҫри рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем! Вырӑнти майсемпе усӑ курас ӗҫре ытларах пуҫарулӑх кӑтартӑр, халӑхпа Хӗрлӗ Ҫар валли таварсем туса кӑларассине ӳстерӗр!

42. Чугун ҫул ҫинчи работниксем! Ҫарсем ларса пыракан, ҫарпа халӑх хуҫалӑхӗ валли кирлӗ грузсене тиенӗ транспортсене хӑвӑрт ҫӳретессине организацилӗр! Чугун ҫулсем ҫинче ҫарти пек дисциплинӑна ывӑнма пелмесӗр ҫирӗплетсе пырӑр! Нимӗҫсем аркатса хӑварнӑ чугун ҫулсемпе ҫурт-йӗрсене юсаса ӗҫе ярӑр!

43. Тинӗс транспорчӗпе юханшыв транспортӗнчи работниксем! Флота, портсемпе пристаньсене пӗр чӑрмавсӑр, тӗрӗс-тӗкӗл ӗҫлеттерӗр! Фронтпа тыла грузсем хӑвӑртрах ҫитерсе парӑр!

44. Колхозниксемпе колхозницӑсем, совхозсенчи рабочисемпе работницӑсем! Фронтпа ҫӗршыв валли ытларах апат-ҫимӗҫ тата промышленность валли ытларах чӗртавар парса тӑрӑр. Выльӑх-чӗрлӗхсен йышне ӳстерсе пырӑр тата вӗсен тухӑҫлӑхне хӑпартӑр! Фронта пулӑшма, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма пӗтӗм вӑя хурар!

45. Совет интеллигенцийӗ! Совет учрежденийӗсенчи работниксем, инженерсем, учительсем, агрономсем, врачсем, наукӑпа искусство тата литература работникӗсем! Нимӗҫсен фашистла пусмӑрҫисене хирӗс кӗрешес ӗҫе хамӑрӑн пӗтӗм вӑйпа пӗлӗве парар!

46. Тӑшманран ирӗке кӑларнӑ районсенчи ӗҫҫыннисем! Гитлерла вӑрӑ-хурахсем ҫӗмӗрсе хӑварнӑ хуласемпе ялсене, промышленноҫа, транспорта тата ялхуҫалӑхне хӑвӑртрах юсаса ура ҫине тӑратӑр!

47. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем! Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар ҫӗршер хулапа пиншер ялсене нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларчӗ! Фашистла пусмӑрлӑхран ирӗке кӑларнӑ хамӑрӑн тӑвансене нимӗҫсем ҫӗмӗрсе хӑварнӑ хуҫалӑха юсаса ура ҫине тӑратма пӗтӗм вӑйпа пулӑшар!

48. Совет хӗрарӑмӗсем! Производствӑри специальноҫсене тӗплӗн вӗренсе алла илӗр, ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗр чарӑнусӑр ӳстерсе пырӑр! Сывлӑшран тата химиллӗ тапӑнуран сыхланас ӗҫе, санитари ӗҫне, ҫыхӑну ӗҫне вӗренӗр! Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешме пӗтӗм вӑя хурар!

49. Совет ҫамрӑкӗсемпе хӗрӗсем! Фронта пулӑшас тесе вӑя шеллемесӗр ӗҫлӗр, производство техникине вӗренсе алла илӗр, ӗҫ дисциплинин чи лайӑх тӗслӗхӗсене кӑтартса пырӑр, ҫар ӗҫне ывӑнма пӗлмесӗр вӗренӗр! Сывӑ пулччӑр совет ҫамрӑкӗсем!

50. Коммунистсемпе комсомолецсем! Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешекенсен малти речӗсенче пулӑр!

51. Сывӑ пултӑр Ленинла Комсомол—пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре большевикла партие шанчӑклӑн пулӑшаканӗ!

52. Сывӑ пултӑр пирӗн мухтавлӑ Советлӑ Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗ!

53. Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ, Ленин—Сталин партийӗ—нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене ҫӗнтерессишӗн пыракан кӗрешӗве хавхалантарса тата организацилесе пыраканӗ!

54. Ленин ялавӗпе, Сталин ертсе пынипе, нимӗҫ оккупанчӗсене йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкма тата вӗсене Тӑван ҫӗршывран хӑваласа кӑларма—малалла!

ПӖТӖМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсет, продукци пахалӑхӗ лайӑхланать

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра октябрӗн 1-мӗшӗнче ӗҫе мӗнле организациленине пӑхса тухас тӗлӗшпе смотр пуҫланчӗ. Ку ӗҫе нумай рабочисемпе работницӑсем тата инженерла-техникла работниксем активлӑн хутшӑнчӗҫ. Халӗ заводри цехсенче ӗҫе мӗнле организациленине пӑхса тухас тӗлӗшпе 26 комисси тата темиҫе вунӑ бригада ӗҫлеҫҫӗ.

Ӗҫе мӗнле организациленине пӑхса тухни пахa результат парать. Иртнӗ 25 кун хушшинче темиҫе ҫӗр сӗнӳ пухнӑ. Вӑл сӗнӳсене пурнӑҫа кӗртни ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, продукци пахалӑхне лайӑхлатма майсем парать. Ҫапла, Забиякин юлташ начальник пулса ӗҫлекен цехра 45 сӗнӳ пухнӑ. Вӗсенчен иккӗшне пурнӑҫа кӗртни кӑна 50 пин тенкӗ перекетлеме май парать. Ҫав цехрах ӗҫе тӗрӗс организациленине пула 4 ҫынна урӑх ӗҫе кусарма май тупнӑ. Литейнӑй цехра 15 сӗнӳ пухнӑ. Вӗсенчен тӑваттӑшне пурнӑҫа кӗртнӗ ӗнтӗ.

Механически цехра 20 сӗнӳ пухнӑ тата чылай рабочисене икӗ станокпа ӗҫлеттерме майсем тупнӑ. Цехри 8 рабочи икшер станокпа ӗҫлеме тытӑннӑ та ӗнтӗ. Коммунальнӑй ҫуртйӗр хуҫалӑхӗнче чылай работниксем икӗ профессипе ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫакӑ 13 пин тенкӗ перекетлеме май парать.

Ӳкерчӗк ҫинче. Шупашкарти табак фабрикинчи паллӑ стахановка Ф. М. Каргина юлташ.
Н. ДАНИЛОВ фото-ӳкерчӗкӗ.

Ӗҫе мӗнле организациленине тӗрӗслени май, пӗтӗм завод ӗҫӗ лайӑхланса пырать. Халӗ завод коллективӗ Октябрь уявӗ умӗнхи обязательствӑна чылай енӗпе ирттерсе тултарать.

МОСЕНКО,
Завком председателӗ.

Пирӗн ялсоветӗнчи колхозсем аван ӗҫлеҫҫӗ

ШАХАСАН. Кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне Ҫӗнӗ Мами ялсоветне кӗрекен колхозсем аван ӗҫлерӗҫ. Тӑрӑнти «Красный партизан» колхоз (председателӗ И. Васильев) тӗштырӑсене 16 ӗҫкунӗнче пухса кӗртрӗ. Кӗлтесене августӑн 20-мӗшӗ тӗлне капана хывса лартрӗ, сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтерчӗ. Государствӑна тырӑ тата ытти продуктсем пӗтӗмпех парса татрӗ. «Активист» колхоз кӗрхи ҫӗртмепе каярах юлнӑччӗ. Пулӑшу панӑ хыҫҫӑн, ку колхоз та кӗрхи ҫӗртмене октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне туса пӗтерчӗ. Ҫавӑн пекех ялсоветӗнчи пур колхозсем те хӗле тӗплӗн хатӗрленсе ҫитрӗҫ. Молотов ячӗпе тӑракан тата «Красный партизан» колхозсен фермисенех илер. Витесенче таса, ҫутӑ, ӑшӑ. Апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ таран хатӗрлесе хунӑ.

Государствӑна вӑрман касса турттарса парас ӗҫе эпир планпа туса пытӑмӑр. Вӑрман хатӗрлемелли плана ялсовет уйӑхран уйӑхах ирттерсе тултарать.

Пирӗн ялсоветӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем пурте ӗҫкунӗсен минимумне тултарнӑ. Вӗсем хӑйсем тӑрӑшса ӗҫлени тӑшмана тӗппипех пӗтерсе тӑкас куна ҫывхартнине ӑнланаҫҫӗ. Октябрь уявне ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем туса кӗтсе илме тӑрӑшаҫҫӗ.

И. КУЗЬМИН.

Вӑрман хатӗрлевӗнче лайӑх ӗҫленӗшӗн премi панӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрӗн 28-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Районри вӑрманпромхоз ҫуллахи ӗҫсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртрӗ. Вутӑ 3.000 кубометр вырӑнне 5.371 кубометр хатӗрленӗ тата 450 кубометр вырӑнне 926 кубометр турттарнӑ. Уйрӑмӑнах сентябрь уйӑхӗнче лайӑх ӗҫленӗ: плана вутӑ хатӗрлес енӗпе 278 процент, турттарас енӗпе 351 процент тултарнӑ.

Вутӑ хатӗрленӗ ҫӗрте Янчеллӑ ялсоветӗнчи колхозсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. «Прогресс» колхоз плана 146 процент тултарнӑ, ытти колхозсем те ирттерсе тултарнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫуллахи вӑхӑтра вутӑ хатӗрлес плана ирттерсе тултарнӑшӑн вӑрманпромхоза 10.000 тенкӗ укҫа панӑ. Ҫак укҫапа вӑрманпромхозри ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисемпе работницӑсене премилеҫҫӗ. Вӑрманпромхоз коллективӗ Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура хӑйӗн ӗҫне лайӑхлатсах пырать

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн анатри тăрăхĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, 12 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 80 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Запорожье облаçĕнчи БОЛЬШАЯ БЕЛОЗЕРКА тата ИВАНОВКА ятлă район центрĕсем, БАЛКИ, МАЛАЯ БЕЛОЗЕРКА, ПЕСКОШИНО, МЕНЧИКУР, ГАВРИЛОВКА, КОРНЕЕВКА, ВЕРХНЯЯ ТОРГАЕВКА, МАЛАЯ БЛАГОВЕЩЕНКА, НОВАЯ ЗАВАДОВКА, НИЖНЯЯ ТОРГАЕВКА, ПАВЛОВКА, ШОТОВО, НОВАЯ СЕМЕНОВКА, КОНСТАНТИНОВКА, НОВАЯ ДАНИЛОВКА, КРАСНЫЙ, ВИНОГРАДНИК, БАТРАК, ВОЛЧИЙ ятлă пысăк ялсем тата БОЛЬШОЙ УТЛЮГ ятлă чугун çул станцийĕ пур.

ДНЕПР шывĕн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тănине çĕнтере-çĕнтере, наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 26 пункта тытса илнĕ. Вăл шутра КУДАШЕВКА, ПРЕОБРАЖЕНКА, ПЛАТОНОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, МАЛО-МИХАЙЛОВКА, БЕРЕЗНОВАТОВКА, ШМАКОВО, КОНСТАНТИНОВКА, 1-МĔШ АЛЕКСАНДРОВКА, 2-МĔШ АЛЕКСАНДРОВКА, РАДЯНКА ятлă ялсем тата ЕЛИЗАРОВО ятлă чугун çул станцийĕ пур.

КРИВОЙ РОГ хули енче пирĕн çарсем тăшман пехотин тата танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă контратакăсене сире-сире янă.

ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче МЕЖА, ПРУДНИКИ ятлă пысăк ялсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерине миномётсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 60 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тăшманăн 64 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Днепр шывĕн анатри тăрăхĕнчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Балки-Малая Белозерка участокĕнче нимĕçсем окопсемпе траншейăсем нумай туса тултарнă, минăсем лартса тухнă, пралук картисем туса хунă. Çав рубежпа усă курса, тăшман пирĕн наступлени туса пыракан çарсене чарма хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та оборонăн çав рубежĕнчи нимĕç çарĕсене ывăтса янă. Тепĕр участокра пирĕн çамăллăн куçса çӳрекен чаçсем тăшман тылне çав тери хăвăртăн кĕрсе кайнă та тăшмана йĕркерен кăларнă. Нимĕçсем каялла чакаççĕ, техникăпа алăри хĕçпăшала пăраха-пăраха хăвараççĕ. 73 тупă, танксем юсамалли мастерской, унта пулнă «тигр» йышши 20 йывăр танка ытла, боеприпассен пысăк складĕсене тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

Азовски тинĕс хĕрринче тăшман Большой Утлюг шывĕпе усă курнă. Çав рубежра кунĕпех вăйлăн çапăçнă. Совет çарĕсем çĕнтерсе çиеле тухнă. Пирĕн чаçсем çав шыв урлă каçнă та, тылран тата флангсенчен пырса çапса, Большой Утлюг чугун çул станцине тытса илнĕ. Çав участокри çапăçура нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 30 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупă, 200 автомашинăпа лав ытла, 30 автобензозаправщик тата горючи складне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче темиçе вунă хир тупи тата хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем, çар хатĕрĕсем тиенĕ 300 вагона çити, боеприпассен, апат-çимĕçĕн тата çар пурлăхĕн 12 складĕ пур.

* * *

Днепр шывĕн кукринче, Днепропетровск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 26 пункта тытса илнĕ. Совет çарĕсем [illegible] пехотине темиçе хут та контратакăна кĕртсе янă, çав пехотăна танксем пулăшнă. [illegible] тăшман атакисене те сирсе янă. Нимĕçсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем [illegible] çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшман пехоти атакăна кĕме тăрнă, [illegible] пирĕн артиллеристсем миномётчиксемпе вăйлă пеме тытăннă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 800 вилли [illegible] çар пурне, нимĕçсем хĕçпăшал пăрахса хăварнă.

Кривой Рог хули енче пирĕн çарсем тăшманăн контратакисене сирсе янă, нимĕçсене çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем хăйсен пехотине танксемпе пулăшса атакăна [illegible]. Совет боецĕсем 1.000 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен 26 танкне çунтарса янă е пĕтерсе тăкнă. Тăшмана каялла чакма лекнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем 3 артиллери батарейине персе çĕмĕрнĕ, нимĕçсен 65 [illegible].

Пулемет, танксене пемелли 18 пăшал, боеприпассен складне тата 2 продовольстви складне тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 27 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Пĕр участокра гитлеровецсен пĕр батальонĕ, 5 танк пулăшнипе, контратака тунă. Старши лейтенант Жданов командир пулса ертсе пыракан подразделенири бронебойщиксем нимĕçсен танкĕсене сывăхах янă та пеме пуçланă. Нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ, вара ыттисем васкасах каялла чакнă. Тăшманăн контратаки пăчланса ларнă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 6.000 тавкан суднине шыва путарнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр пысăк ялта вырнаçса тăнă нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Тăшман партизансем тапăнасса кĕтмен пулнă, çавăнпа йĕркеллĕн хирĕç тăма пултарайман. Партизансем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 35 салтакĕ, алăри хĕçпăшалĕсене пăрахса, тыткăна парăннă. Пиреннисем трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 2 тупă, 8 пулемет тата 70 винтовка пур. Çав отрядах юлашки вăхăтра нимĕçсен 6 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 40 атомашинăна минăсемпе сирпĕнтерсе янă.

* * *

Днепр шывĕн сылтăм енче нимĕçсен 208-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен пĕр ушкăнĕ тыткăна парăннă. 309-мĕш полкри 1-мĕш батальонра пулнă салтаксем Эрих Лоренц тата Карл Лерке çапла каласа пачĕç: «Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче пире маршевăй батальонпа Киева илсе килчĕç. Кунтан малалла эпир çуран кайрăмăр. 208-мĕш дивизи командирĕ пире йышăннă чухне çапла каларĕ: [illegible] Пире пурне те хаяррăн çапăçма чĕнчĕ. Темиçе кун иртсен, вырăссем Днепр урлă каçрĕç. Пирĕн полка [illegible] çапăçăва кĕртрĕ. [illegible] Тепĕр кунне командование [illegible] Эпир [illegible] тата [illegible] парăнтăмăр».

Писательсем торф кăларакансем патĕнче

Çак кунсенче чăваш писателĕсем [illegible] торф кăларакан рабочисем патĕнче пысăк вечер ирттернĕ.

Вечерта чăваш халăх поэчĕ орденоносец Н. И. Полоруссов (Шелеби), С. А. Шуйков (Шавлы), К. А. Афанасьев (Чужăç), вырăс поэчĕ А. Н. Поморский хăйсен произведенийĕсене вуласа пачĕç.

Рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен Н. И. Игнатьев юлташ салам çамах тухса каларĕ. Чăваш поэчĕ Стихван Шавлы вырăссен чаплă поэчĕ—В.В. Маяковскин «Совет паспорчĕ» ятлă сăввине, хăй куçарнăскерне, вуласа пачĕ.

Вечер каçа [illegible] унта 300 çын ытла пулчĕ.

Укçапа япаласен 3-мĕш лотерейи

Пилĕк кун хушшинче 29.109.000 тенкĕлĕх сарнă

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсене республикăра пилĕк кун хушшинче 29.109.000 тенкĕлĕх сарнă. Укçине 20 миллион та 493 пин тенкĕ пухнă. Уйрăмăн илсен лотерея билечĕсене рабочисемпе служащисем хушшинче 4 миллион та 868 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 24 миллион та 242 пин тенкĕлĕх сарнă. Колхозниксемпе колхозницăсем тата единоличниксем лотерея билечĕсен укçине 19 миллион та 481 тенкĕ çийĕнчех хывнă.

Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Ишлей, Вăрмар районĕсем малта пыраççĕ. Тăвай, Калинино, Çĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенче лотерея билечĕсен укçине пухасси сителĕксĕр пырать.

Малта пыракан колхозсемпе танлашмалла

КАЛИНИНО, районри нумай колхозсенче лотерея билечĕсене сарасси ăнăçлăн пырать. Çапла, Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кĕске вăхăтрах 60.000 тенкĕлĕх туянчĕç. Вăл колхозри Малов, Еремеев, Кузьмина, Матвеева колхозниксем кашниех 1000-шер тенкĕлĕх туяннă. Билетсем сарас тĕлĕшпе колхоз председателĕ В. Степанов юлташ тăрăшса ĕçлет. Лотерея билечĕсене сарасси Карачуврари «Социализм çулĕпе», Кăмпалти «Новый путь», Пĕчĕк Каканарти «Ударник» колхозсенче те лайăх пырать.

Анчах та районри чылай колхозсенче çак кирлĕ ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене лотерея билечĕсем , кăларни мĕншĕн кирли çинчен тата вĕсене илмелли йĕркесене тĕплĕн ăнлантарса паман. Çавна пула Ассакассинчи, Ачамçырмари, Мăн Явăнри тата Сăкăтри колхозсенче лотерея билечĕсене сарасси çителĕксĕр хăвăртлăхпа пырать.

Б. ШОРНИКОВ.

КĔСКЕН

● ЭЛЕК. Районри предприятисемпе учреждениесенчи рабочисемпе служащисем хушшинче лотерея билечĕсене 50.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 26.000 тенкĕ пухнă. Писĕпри туллимар вăтам шкул коллективĕ лотерея билечĕсем илме уйăхри ĕç укçин 40 процентĕ чухлĕ çыраннă. Ку таранччен лотерея билечĕсен укçине Вырăс Сурăменчи вăтам шкул, районти çĕрĕç пайĕн, вăрманпромхоз тата больница коллективĕсем пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

● ШАХАСАН. Матнӳри «Молодой колхозник» колхоз членĕсем лотерея билечĕсене 18.550 тенкĕлĕх туянчĕç. Колхозри стахановец Николай Максимов 375 тенкĕлĕх çыранчĕ, укçине те çийĕнчех тӳлесе татрĕ.

● Шупашкарти пулă тытакансен бригадинче лотерея билечĕсене туянман çынсем пачах çук. Вĕсем уйăхри ĕç укçин 30 проценчĕ чухлĕ çыраннă. «Кожупряжь», стройдетальсем тăвакан тата ытти чылай предприятисемпе учреждениесенче лотерея билечĕсене сарас ĕçе вĕçленĕ.

Ачасем фронта мĕн çыраççĕ

ИКĔ ÇЫРУ

Пирĕн редакцие фронтран Г. Т. Закамский лейтенантран çыру килчĕ.

«Паян 9 çулхи ывăламран—Аччари туллимар вăтам шкулăн 3-мĕш класĕнче (Канаш районĕ) вĕренекен Леонардран патриотла çыру илтĕм,—тесе çырать вăл.—Çырăва илсенех эпĕ ăна юлташсене вулаттартăм. Ун хыççăн эпир вăл çырăва «фронтовая правда» хаçат редакцине патăмăр.

Тăван ачасенчен килекен патриотла çырусем пире, фронтовиксене, питĕ савăнтараççĕ. Манăн Леонард ирĕнĕ çырусенче те: атте, эсĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç çирĕппĕн кĕреш, эпĕ кунта лайăх вĕренме тăрăшатăп, халĕ «отлично» тата «хорошо» паллăсем кăна илсе пыратăп, тесе çырчĕ. Çавăнпа та эпĕ, подразделенири юлташсем ыйтнипе, Леонард çырăвĕ çинчен сирĕн редакцие пĕлтерес терĕм.

Сире эпĕ хамăн çырупа пĕрле Леонард çырăвне тата вăл ман пата янă численник листисене те ярса паратăп. Вĕсем çинче «Комиссар», «Çĕнтерӳ пирĕнте пулать» ятлă сăвăсем, «Пулеметчик Терентьев», «Капитан Гастелло», «Пĕччен çĕр çынна хирĕç» ятлă пĕчĕк очерксем, Степан Щипачевăн «Тавăру сывхарать» ятлă сăвви пур.

Лейтенант Г. ЗАКАМСКИЙ».

Аялтарахра 9 çулхи Леонард Закамский ашшĕ патне фронта янă çырăва пичетлетпĕр. Ака вăл:

„Тăшмана пульăпа, штыкпа гранатăпа вĕлер!“

«Ырă кун пултăр, атте!

Мĕнле пурăнатăн? Эпир ĕнер сан çырăва илтĕмĕр. Анчах вуламанха, мĕншĕн тесен анне ĕçрен таврăнаймарĕ. Эпир Юрăпа пĕрле килте ларатпăр.

Эпир кунта лайăхах пурăнатпăр.

Атте, эсĕ тăшмана пульăпа, штыкпа, гранатăпа вĕлер! Эсĕ тăшманпа Василий Кисляков пек тата совет халăхĕн ытти боецĕсем кĕрешнĕ пек паттăррăн кĕреш! Эпĕ сан пата, атте, совет çĕршывĕн геройĕсем çинчен çырнă численник листисене ярса паратăп.

Ывăлу—Леонард ЗАКАМСКИЙ».

Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесене пулăшатпăр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кĕчкей ялсоветĕнчи «Красный Корт» колхозра эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ 3 çемье пур. Вĕсене колхоз (председателĕ Х. Волков) лайăх условисем туса панă. Кашнине уйрăм çурт, 0,15-шер гектар çĕр участокĕ панă. Унта вĕсем тухăçлă çĕрулми тата пахча çимĕç туса илчĕç. Халĕ колхоз, хĕл кунĕсем çывăхарса килнĕ май, кашни çемьене виçшер килограм çăм, пĕрер сурăх путекки парса пулăшрĕ, 32 килограмм çăнăх пачĕ. Кунсăр пуçне, колхоз ферминчен йӳнĕ хакпа сĕт-çу тата уйран парса тăрать. Хĕлле валли вутă хатĕрлесе парать.

Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ А. Ростина, Е. Ефимова, М. Малютина юлташсем колхоз ĕçĕнче лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал 130—150-шар ĕçкунĕ тунă. Халĕ ĕçкунĕ пуçне пĕрер килограмм тырă илнĕ.

Ник. АНДРЕЕВ,
Колхоз счетоводĕ.

Комсомол XXV çул тултарнине уявлани

ШУПАШКАРТА

Октябрĕн 29-мĕшĕнче Советсен Çуртĕн ларусем пулакан залне хулари комсомол активĕ чаплă пухăва пухăнчĕ.

Пуху президиумĕнче — ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов юлташ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Андреев, Лисин тата Иванов юлташсем, Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕнчи комсомолецсен делегацийĕ, хулари стахановецсем

Пуху, тăваллăн алă çупса, хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйларĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ Комсомол 25 çул тултарни çинчен доклад туса пачĕ. Ун хыççăн Балтика флотĕнчи комсомолецсен делегацийĕн членĕ старши лейтенант-орденоносец Лебедев тата хулари пионерсем лару участникĕсене уяв ячĕпе саламларĕç, хулари комсомолецсем Сталин юлташ патне çырнă çырăва йышăнчĕç.

Чаплă лару хыççăн чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ тата хулари художествăллă пултарулăх кружокĕсем концерт пачĕç.

КАНАШРА

Уяв ячĕпе хулари комсомолецсемпе çамрăксен вечерĕ пулса иртрĕ. Ленинла-Сталинла Комсомол 25 çул тултарни çинчен ВКП(б) хула комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ Ламков юлташ доклад туса пачĕ. Çамрăксем Сталин юлташ патне çырнă çырăва йышăнчĕç.

Вечерта хулари çар чаçĕсенчи комсомолецсем тата хулари çамрăксем хăйсен художествăллă пултарулăхне кăтартрĕç. Вечерта 250 çамрăк ытла пулчĕ.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Чăваш АССР прокуратурин оргаĕсем Ишлей районĕнчи Папанин ячĕпе тăракан, Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» тата Етĕрне районĕнчи «Пионер» колхозсенче колхоз тыррине вăрланине пĕлнĕ.

Ишлей районĕнчи Папанин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулнă Е. Серебрякова тĕрлĕ вăхăтра колхозăнне 1.082 килограмм тырă вăрланă. Çак ĕç паллă ан пултăр тесе, вăл суя документсем тунă, çак тырра колхоз хуçалăхĕ валли расходланă пек кăтартасшăн пулнă.

Чăваш АССР Верховный сучĕн уголовнăй енĕпе ĕçлекен судебнăй коллегийĕн сессийĕ Серебряковăн ĕçне вырăна кайса пăхса тухнă, ăна çак ĕçсемшĕн 10 çул хушши тĕрмере лармалла тата 5 çул суйлав прависĕр хăвармалла тунă. Вăрланă тыррăн хакне унран шыраса илсе, колхоза памалла тунă.

Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхоз бригадирĕ Н. Саланов, В. Ласковенковпа пĕрле пулса, кăçал авăн çапнă чухне колхоз итемĕнчен 77 килограмм [illegible] вăрланă. Саланов колхозăн пĕрлешсе апатланмалли столовăй фондĕнчен те 40 килограмм çăнăх вăрланă пулнă.

Салановпа Ласковенкова çак ĕçсемшĕн арестленĕ, вĕсене суд умне тăратаççĕ.

Етĕрне районĕнчи «Пионер» колхозра колхоз тыррине вăрлакансен ушкăнне тытнă. Вĕсене колхоз бригадирĕ П. Петров тата хуралçă И. Димитриев ертсе пынă. Вĕсем колхоз итемĕнчен тырă вăрласа тăнă. Вĕсем патĕнче ухтарнă хыççăн пĕр тонна ытла тырă тупнă.

Çак йышра тăнă Петров, Димитриев, Павлов, Алексеев тата Долгова вăрăсене халĕ арестленĕ, 1932 çулхи августăн 7-мĕшĕнчи закон тăрăх ответ тыттараççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи пур хуласемпе районсенчи прокурорсене те колхоз тыррине вăрлакансене тата ăна вырăнсăр салатакансене çийĕнчех ответ тыттарма хушнă. Колхоз руководителĕсем хăйсен тимсĕрлĕхĕпе çак ĕçсене тума пулăшаççĕ пулсан, вĕсене те ответ тыттармалла.

Муссульмансен духовенствипе ĕненекенĕсен съезчĕ

ТАШКЕНТ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 15-мĕшĕпе 19-мĕшĕ хушшинче Ташкентра Узбек, Таджик, Туркмен, Киргиз тата Казах ССР-ĕсенчи муссульмансен духовенствипе ĕненекенĕсен съезчĕ пулса иртнĕ.

Съезд Вăтам Азирипе Казахстанри муссульмансен духовнăй управленине суйласа лартнă. Çав управлени Ташкент хулинче ĕçлет.

Духовнăй управлени председателĕ — муфтийĕ пулма, пурте пĕр сасăлăн пулса, 82 çулхи Ишан Бабахано Абдумджиктханова суйланă. Вăл — узбек, аслă духовнăй шкултан вĕренсе тухнă.

Съезд мĕнпур муссульмансене нимĕç захватчикĕсемпе хаяррăн кĕрешме чĕннĕ.

Съезд, питĕ хавхаланса, СССР Правительствин тата Вăтам Азири республикăсемпе Казахстан республикин правительствисен руководителĕсене яма саламлă телеграммăсем йышăннă.

Ют çĕршывсенче

Гитлеровецсем Совет Союзĕн культура пуянлăхĕсене мĕнле çаратаççĕ

НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА ХАÇАЧĔ КАЛАНИ

СТАМБУЛ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС.) Нимĕçсен «Бухарестер тагеблат» ятлă фашистла хаçачĕ статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра гитлерла влаççем оккупациленĕ совет территорийĕнчен Германие «илсе кайнă» (урăхла каласан, вăрласа кайнă) культура япалисем çинчен çырнă. Хаçат çапла çырать: çав япаласене «çар чаçĕсем çумĕнче тунă уйрăм ушкăнсем пухаççĕ, вăл ушкăнĕнче çав ĕçе лайăх пĕлекен çынсем пур», тет. Хаçат каланă тăрăх, Ленинград облаçĕнчен патша двореçĕнче пулнă искусство япалисене нумай илсе кайнă. Сăмахран, Гатчинăран патшасемпе чаплă çынсен 400 картинипе портретне илсе кайнă. Кĕмĕлтен тунă питĕ илемлĕ япаласене те илсе кайнă.

«Пирĕн çарсем Воронежа тытса илнĕ хыççăн университет библиотекинчи кĕнекесен пĕр пайне турттарса кайнă»,—тесе çырать хаçат. Вăл тата нимĕçсем соборсенчи иконăсене те, вырăссен авалхи искусствин памятникĕсем пулса тăракансене, илсе кайни çинчен çырать. Нимĕçсем Новгородран хаклă кĕнекесене 34 пин тома яхăн илсе кайнă, çав шутра XVI-мĕш ĕмĕрти 500 ытла алçырăвне те илсе кайнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем татах малалла куçнă, тепĕр паха çуллĕ вырăна йышăнса илнĕ. Акăлчансен саккăрмĕш армийĕн фронтĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Англипе Канада çарĕсем кăнтах малалла куçнă, Монтефальконе ятлă вырăна йышăнса илнĕ.

Октябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Америка крейсерĕпе эсминецĕсем Рим çулĕ çинчи Гаэта портĕнчен 8 мильăра тăракан тăшманăн Минтурнăри çыранĕнчи позицийĕсене пенĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене тата Эгейски тинĕс районĕнчи аэродромĕсене темиçе хутчен хаяррăн тапăннă

ШВЕЦИ ХАÇАЧĔ ГЕРМАНИРИ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин «Гетеборгс хандельстиднинг» ятлă хаçачĕ Германири шухăш-кăмăлсем çинчен статья пичетлесе кăларнă. Статья авторĕ, Германирен нумай пулмасть таврăннăскер, нимĕçсен анлă массисем Германия çĕнтересси пирки иккĕленеççĕ, тесе çырать. Халăх ывăнса çитни çав тери уççăн курăнать. Бомбăсем ишĕлтерни хуласенче, пуринчен ытла портлă хуласенче, питĕ хăрушшăн курăнать. Нимĕçсен пичĕсем çине пăхсан, вăрçă асапĕ йывăрланнăçемĕн йывăрланса пыни курăнать. Çынсем ырханланса кайнă. Кашни çын пурнăçри чи кирлĕ япаласем çитменни çинчен каласа парать. Германи порчĕсене кĕрекен Швеци суднисем çинчен тухакан çынсене нимĕç çыннисем, вĕсем хушшинче салтаксемпе чиновниксем те пур, сыпăнса илеççĕ те мĕн те пулин çимелли ыйтаççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ МОНО УТРАВĔ ÇИНЕ АННА

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен çарĕсем Соломон утравĕсен ушкăнĕнчи Моно утравĕ çине пырса аннă. Японин утрав çинчи пысăк мар гарнизонĕ вăйлах хирĕç тăман. Моно утравне тытса илнĕ союзниксен çарĕсем халь паха базăллă Шордлэнд утравĕнчен 30 мильăра тата Бугенвиль утравĕнчен 50 мильăра тăраççĕ.

Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче, вăрçă пыракан вырăнĕсенче, союзниксен авиацийĕ пуринчен ытла Японин тинĕс çулĕсене атакăланă.

ТОКИО, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 27-мĕшĕнче ирхине союзниксен подводнăй лодки Хĕвелтухăç Китай тинĕсĕнче Японин икĕ суднине торпедăсем ярса путарнă.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 27-мĕшĕнче ирхине союзниксен çарĕсем Моно утравĕ çине (Соломон утравĕсен ушкăнĕнче) пырса аннă

Пĕлтерӳ

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕнче (Чувашски ур., 6) инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми: **«Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни».** Докладчиксемпе пропагандистсен пымалла.

Докладчик — старши лейтенант **Мошнин юлташ.**

ВКП(б) Горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти макарон фабрикине çакăн пек работниксем кирлĕ: экономист-плановик, снабжени отделĕн начальникĕ, технически контроль-отделĕн начальникĕ, грузчиксем.

Грузчиксем валли общежити пур.

Фабрикăн хăйĕн столовăйĕ тата çăкăр лареке пур.

2—1.

Мунчара ĕçлеме çак ĕççене пĕлекенсем кирлĕ: кочегарсем, кочегар помощникĕсем, банщиксем, швейцарсем, шофер, грузчик тата охранниксем.

Апат-çимĕç параççĕ. Пурăнма общежити пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ярославская, 25, директору бани.

2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1860 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6 53 84 л. л.